# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

6 (7540) № * Шăмат кун, 2008 çулхи январĕн (кăрлач) 26-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Раççейре

## Февральте пенсисем ӳсеççĕ

РФ Правительствин тунти кун иртнĕ ларăвĕнче пенси виçисене ӳстерме палăртнă. Пенсисене февраль уйăхĕнчен малтан шутланă пек 8 процент мар, 12 процент пысăклатаççĕ.

Раççейре паян ĕç пенсийĕн вăтам виçи 3739 тенкĕпе танлашать. Хăпартнă хыççăн вăл 3961 тенкĕ пулать, 222 тенкĕ чухлĕ ӳсет. Çав шутра ватлăхпа паракан пенси 3979 тенкĕрен 4218 тенке çитет, 239 тенкĕ хушăнать. Инвалидноçпа паракан пенси 2873 тенкĕрен 3008 тенке хăпарать, 135 тенкĕ пысăкланать. Тăрантаракана çухатнипе паракан пенси 2105 тенкĕрен 2259 тенке çити ӳсет, 154 тенкĕ хушăнать.

Икĕ пенси илекенсен çапла пысăкланать:

– çарта инвалида тухнисен 9756 тенкĕ вырăнне10023 тенкĕ,

– Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсен 9555 тенкĕ вырăнне 9834 тенкĕ,

– Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнĕ салтак арăмĕсен 7410 тенкĕ вырăнне 7532 тенкĕ,

– çарта вилнĕ салтаксен ашшĕ-амăшĕсен 6715 тенкĕ вырăнне 6922 тенкĕ,

– «Жителю блокадного Ленинграда» паллăпа наградăланă инвалидсен 7003 тенкĕ вырăнне 7296 тенкĕ.

Ку хутĕнче пенсисем вĕсен страхлакан пайĕ 12 процент ӳснĕрен пысăкланаççĕ.

Республикăра

## Туслă, килĕштерсе пурăнатпăр

Пирĕн республикăра 97 халăх çынни пурăнать. Чăвашсем (67,7 процент), вырăссем (26,5 процент), тутарсем (2,8 процент) тата ытти халăх.

Республикăра наци культура обществи пĕрлешĕвĕсем 22. Вĕсем 12 халăх çыннисене пĕрлештерсе тăраççĕ.

Тĕрлĕ наци çыннисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ. Çак кунсенче ЧР культура, Журналистсен союзĕ, Национальноçсен ĕçĕсен канашĕ тунă килĕшӳ те тĕрлĕ халăх çыннисен туслăхне малалла çирĕплетме пулăшĕ.

## Районсене – хушма укçа

ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров çак эрнере кăнтăр районсенче пулчĕ. Президент районсен экономикипе, социаллă пурнăç аталанăвĕпе паллашнă.

Пăрачкав районне республика бюджечĕнчен 17 миллион тенке яхăн уйăрнă. Улатăр районĕ 28 миллион тенкĕ хушма укçа илет. Улатăр хули – 40 миллион тенкĕ.

## Тĕнче Кубокĕ валли электрон кăларăмĕ, сувенирсем

Май (çу) уйăхĕн 9-12-мĕшĕсенче Шупашкар тĕнчери хăвăрт утакансене пуçтарать. Халĕ тĕнче Кубокне хатĕрленеççĕ. «Чувашия спортивная» электрон кăларăм республикăри спорт аталанăвĕпе паллаштарĕ. Халăх промыслин ăстисем тĕрлĕ сувенирсем хатĕрлеççĕ. Культура, спорт, экономика аталанăвĕн министерствисем пĕрлехи ларура Тĕнче Кубокне спортсменсем çеç мар, гостиница, транспорт, суту-илӳ ĕçченĕсем те хатĕр пулмаллине палăртнă.

## Сывлăх сыхлавĕ çĕнĕ шая çĕкленет

РФ Президенчĕ В.В. Путин Раççейре çĕнĕ йышши 15 медицина центрĕ хута яма палăртать. Вĕсенчен пĕри – травматологи, ортопеди тата эндопротезировани центрĕ – пирĕн республикăра уçăлать. Çак центрта çĕршыври 8 регионти халăха сиплеме палăртаççĕ.

Январĕн 23-мĕшĕнче ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров В.В. Путина çак центра тăвас ĕçсем вĕçленсе пынине пĕлтернĕ.

## Президент стипендине тивĕçрĕ



*Светлана Савельева районти тĕп больницăри эндоскопи кабинетĕнче медицина сестринче вăй хурать. Вăл кунти яшсемпе хĕрсен «Çамрăк чĕресем» канашĕн членĕ.*

*Сăн ӳкерчĕкре: Светлана Савельева кăçал ЧР Президенчĕн стипендине илме тивĕçлĕ пулчĕ.*

Йышăну

## Çамрăксен сĕнĕвĕсене те шута илĕç

Депутатсен районти Пухăвĕ 2007 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче С-23/1 йышăну кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнче çамрăксен парламентне йĕркеленĕ, ун пирки калакан положение çирĕплетнĕ. Вăл çамрăксен районăн обществăпа политика пурнăçне активлă хутшăнтарма, çамрăксен политики тĕлĕшпе нормативлă право акчĕсем йышăннă чухне çамрăксен сĕнĕвĕсене тăратма тивĕç.

Çамрăксен парламенчĕн тĕп тĕллевĕсем çаксем:

– депутатсен районти Пухăвĕн комиссийĕн ларăвĕсенче çамрăк граждансен прависемпе тата саккунлă интересĕсемпе çыхăннă ыйтусене пăхнă чух вĕсене хутшăнасси;

– патшалăхăн çамрăксен политики тĕлĕшпе информаципе аналитика ĕçне туса ирттерме пулăшасси;

– çамрăксен политки тĕлĕшпе Чăваш Республикин патшалăх влаç органĕсемпе, вырăнти самоуправлени органĕсемпе, çамрăксен обществăлла организацийĕсемпе тата пĕрлешӳĕсемпе çыхăнса ĕçлесси;

– çамрăксен политикин тата çамрăксен парламент юхăмĕн сферинче регионсем тата районсем хушшинчи çыхăнусене аталантарасси.

Парламентăн депутатсен районти Пухăвне çамрăксене пырса тивекен йышăнăвĕсен проекчĕсем тăрăх сĕнӳсем тăратма, çамрăксен ыйтăвĕсемпе ЧР патшалăх влаç органĕсемпе, вырăнти самоуправлени органĕсемпе, патшалăх организацийĕсемпе тата учрежденийĕсемпе çыхăнса ĕçлеме, депутатсен районти Пухăвĕн комиссийĕсен ĕçне хутшăнма, хăйĕн ĕçне йĕркелессипе йышăнусем тума полномочисем пур.

Çамрăксен парламентне район территорийĕнче пурăнакан 18–25 çулсенчи тата ял тăрăхĕсенчен сĕннĕ çамрăксем, предприятисемпе организацисен тата учрежденисен представителĕсем кĕме пултараççĕ.

Ыйту – хурав

## Пухăнса пынă пенсие илме пулать-ши?

**Манăн ывăл, 1967 çулта çуралнăскер, 2007 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче çĕре кĕчĕ. Эпĕ, унăн амăшĕ, унăн харпăр хăйĕн лицевой счечĕ çине пухăнса пынă пенсие илме пултаратăп-и?**

**Н. ИВАНОВА.**

***Ку ыйту çине РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн ертӳçи Елена Михайловна АЛЕКСАНДРОВА хуравлать:***

– Çапла, илме пултаратăр. Раççей Федерацийĕн Правительстви 2007 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче 741 № йышăну кăларнă. Унта шăпах ĕнтĕ Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕ страхланă çыннăн пухăннă пенсине тӳлес йĕрке пирки сăмах пырать. Пухăннă пенсие илме тивĕç çыннăн Пенси фончĕн районти управленине пырса заявлени çырмалла. Заявление страхланă çын вилнĕренпе 6 уйăхран кая юлмасăр Пенси фончĕн кирек хăш территори уйрăмне те пама юрать. Заявлени çырса памалли çак срок иртсе кайнă пулсан ăна судра пăхса тухса çирĕплетме пултараççĕ. Суда çырса панă заявлени пĕрле çак документсем кирлĕ пулаççĕ:

– çын кам пулнине, вăл миçе çултине, ăçта пурăннине ĕнентерекен документсем;

– пухăннă пенсие илме тивĕç çыннăн представителĕ пулнине ĕнентерекен документсем;

– страхланă вилнĕ çынпа çыхăннă хутшăнусене ĕнентерекен документсем (çурални, мăшăрланни, усрава илни çинчен панă свидетельствăсем тата ытти документсем);

– представитель пулнине нотариус çирĕплетнĕ документсем;

– страхланă çыннăн пухăннă пенсине илме ирĕк памани пирки опекăпа попечительство органĕсем йышăну тума пултарнин документĕ;

– пухăннă пенсие илессин срокне палăртнă суд йышăнăвĕ;

– обязательнăй пенси страховани ĕçне туса ирттерекен патшалăха пăхăнса тăман пенси фончĕ пухăннă пенсие резерв фондне куçарса панă май ăна илме тивĕç çынна пама килĕшмннин йышăнăвĕ;

– обязательнăй пенси страхованийĕн ĕçне туса ирттерекен патшалăха пăхăнса тăман пенси фончĕ пухăннă пенсие илме тивĕçлисен пайĕ пирки йышăнни;

– страхланă çыннăн вилнин свидетельстви (пур пулсан);

– страхланă вилнĕ çыннăн обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельстви е РФ Пенси фончĕн территори уйрăмĕнче панă документ (унта страхланă вилнĕ çыннăн харпăр хăй лицевой счечĕн страховани номерĕ пулмалла).

Мартăн 2-мĕшĕнче – РФ Президенчĕн суйлавĕ

## Тăватă кандидат

Тунти кун РФ Тĕп суйлав комиссийĕ хăйĕн ларăвĕнче Раççей Президентне суйлама Дмитрий Медведев кандидатурине регистрацилерĕ.

Унччен КПРФпа ЛДПР ертӳçисене Геннадий Зюгановпа Владимир Жириновские кандидат удостоверенийĕсене панăччĕ.

Кĕçнерни кун Тĕп суйлав комиссийĕ Демократи парти ертӳçин Андрей Богдановăн кандидатурине регистрацилерĕ.

Кандидатсен пĕтĕмĕшле хисепне Тĕп суйлав комиссийĕ ыран пĕлтерет.

Районта: ĕнер, паян, ыран

## Çăкăр хакланать

Тĕнчере апат-çимĕç хакланни пирки нумай калаçаççĕ. Апла пулсан ял хуçалăхĕ тупăшлă ĕçлеме пусĕ. Чăнах та, унччен сĕтне те, аш-какайне те йӳнĕпе парса яма тивнĕ.

Лавккана тавар туянма кĕрсен вара апат-çимĕç хакланни шухăша ярать. Муркашри лавккасене кĕрсен сутуçсем çăкăр хакĕ ӳснине пĕлтерчĕç. Райадминистрацин экономика пайĕн ертӳçи Э.И. Симакова каланă тăрăх, Шупашкарти çăкăр завочĕсем хăйсен продукцине 11 процент хăпартнă. Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсем вара тăкаксене шутлаççĕ.

Газ, электроэнерги палăрмаллах ӳснине шута илсен, вырăнта пĕçернĕ çăкăр та хакланасси куç кĕрет.

## Пĕрремĕш йĕкĕреш

Кашмашри Валентина Николаевнăпа Алексей Геннадьевич Алексеевсен çемйине çĕнĕ çул савăнăçлă хыпар илсе çитерчĕ. Январĕн 16-мĕшĕнче вĕсен йĕкĕреш çуралчĕ.

Йĕкĕрешсенчен аслине Артем ят панă. Грек чĕлхинчен куçарсан «сывлăхлă» тени пулать. Иккĕмĕшĕ – Алексей, «хӳтĕлекен».

Алексеевсен паян çемьере тăватă ача. Русланпа Дмитрий йĕкĕреш шăллĕсене хавaспах кĕтсе илнĕ.

## Хĕллехи каçсенче кичем пулмĕ

Ырă йăлапа хĕлĕн вăрăм каçĕсенче çĕнĕ концертпа театр сезонĕ пуçланчĕ. Смотр-конкурса Ярапайкасси ял тăрăхĕн пултарулăх ушкăнĕсем уçрĕç. Шурчари Культура çурчĕн коллективĕ, «Акуча» юрăпа ташă ансамблĕ, «Екрем» халăх фольклор ансамблĕ ял çыннисене хăйсен ташши-юррипе савăнтарчĕç.

## Раççей Геройĕнчен тĕслĕх илеççĕ

Раççей Геройĕ Евгений Борисов Муркаш лицейĕнчи кадетсемпе тĕл пулчĕ. Вăл вĕренекенсемпе хăйĕн ачалăхĕ, Çурçĕр Кавказра службăра тăни тата хăйĕн çемйи çинчен каласа пачĕ. Паллă ентеш кадетсен нумай ыйтăвне хуравларĕ.

Ырра куракан ырра вĕренет, теççĕ пирĕн халăхра. Паянхи кадетсен Евгений Борисов пек район чапне малалла çĕклесе шанатпăр.

## Каллех – çур аки

Паян райадминистрацин ларусен залĕнче ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисем канашлăва пуçтарăнаççĕ. Çӳтсе явмалли сахал мар. Сĕт, аш-какай туса илессине епле ӳстермелле?

Хуçалăхсенчи укçа-тенкĕ ыйтăвĕ те кăткăс. Çур акие хатĕрленсе удобрени, паха вăрлăх, çунтармалли-сĕрмелли материал туянмалла. Техникăна юсамалла.

Çур аки кĕтмест. Ĕлкĕрмелле.

## Чи лайăх программăна хăш шкул хатĕрлĕ

Халĕ районти шкулсем вĕренӳ учрежденийĕсене информатизаци тумалли программăсем хатĕрлессипе ĕçлеççĕ. Район администрацийĕн вĕренӳ пайĕ ку енĕпе ятарлă конкурс ирттересси çинчен пĕлтерчĕ.

Шкулсенче программа çырма командăсем йĕркеленĕ те ĕнтĕ. Вĕсем, тĕпрен илсен, учительсенчен тăраççĕ. Ку ĕçе пултарулă вĕренекенсене явăçтарсан та аван пулмалла.

**А. ТИХОНОВ**
**хатĕрленĕ.**